Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен,
информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви

Чăваш Республикин Наци библиотеки

Ăслăлăхпа тĕпчев тата меслетлĕх пайĕ

*Чăваш енĕн чаплă çыннисем, паллă кунĕсем*
8-мĕш кăларăм

# Кăвар чĕреллĕ сăвăç

Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 110 çул
çитнĕ май литература каçĕн сценарийĕ

Шупашкар
2009

Редакци совечĕ: М. В. Андрюшкина
Р. Н. Глухова
Г. П. Соловьева
Н. Т. Егорова
Т. А. Николаева

Кăларăмшăн яваплă
Р. Н. Глухова

Кăвар чĕреллĕ сăвăç : Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 110 çул çитнĕ май литература каçĕн сценарийĕ / Чăваш Республикин Наци библиотеки ; хатĕрлекенĕ А. В. Васильева. − Шупашкар, 2009. − 13 с.

Компьютерпа пичетлекенĕ: А. В. Васильева
Версткăлаканĕ: Е. Н. Федотова

© Чăваш Республикин Наци библиотеки

## Кăвар чĕреллĕ сăвăç

Кăçалхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче чăваш поэчĕ, çĕнĕ чăваш сăввине çул уçса параканĕ Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 110 çул çитет. Çак юбилее пирĕн республикăра та, поэт пурăннă вырăнсенче те анлăн паллă тума хатĕрленеççĕ. Ку тĕллевпе библиотекăсенче Çеçпĕл Мишшине халалласа литература каçĕсем, диспутсем, викторинăсем, калаçусем, конкурсем ирттерме пулать. Сире Çеçпĕл Мишши творчествипе литература каçĕ ирттермелли сценарипе паллашма сĕнетпĕр.

Хăтлă пӳлĕмре паллă поэт пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан кĕнеке выставки, стенд хатĕрленĕ. Литература каçĕнче Çеçпĕл Мишши произведенисем тăрăх викторина «Пĕлетĕн-и эсĕ Çеçпĕл сăввисене?», çамрăксем валли «Хурçă шанчăк», «Чăваш ачине» сăвăсем тăрăх «Чăваш ачи сассине парать-и?» диспут ирттерме пулать.

Уявра «Сеспель» кинокартинăпа усă курсан вырăнлă пулĕ. Савăнăçлă тĕл-пулу лайăххрах ирттĕр тесен ертсе пыракансен сăвăсене пăхмасăр калама вĕренмелле.

Паллă поэтăн кун-çулĕнчи ĕçĕ-хĕлĕсем çинчен пысăках мар презентаци хатĕрлесе хăнасене кăтартни литература каçне илем кӳрĕ, интереслĕрех тăвĕ.

*<u>Хутшăнакансем:</u>*
- *1-мĕш ертсе пыракан*
- *2-мĕш ертсе пыракан*
- *Вулакансем*
- *Çеçпĕл Мишши сăнарĕ*
- *Агафия Николаевна сăнарĕ*

*Куракансен умне пысăк экран çинче çутçанталăк илемĕ, поэт çуралса ӳснĕ вырăнсем тухса тăраççĕ. Г. Хирбю çырнă «Патриотлаораторин» иккĕмĕш пайĕ вăраххăн янăрать.*

**1 е. п.** Кăвак тӳпе, сарă хĕвел, симĕс çаран, вăрман шавĕ, шыв юххи, уй-хир хумĕ - çаксем пурте пĕчĕкçĕ Мишшашăн аслă тĕнчен ытарайми илемĕ пулнă, хитре кĕввĕн янраса тăнă. Ĕçре пиçнĕскер, янкăр çăл пек таса, уçă кăмăллă вăл, харсăр та черчен чĕреллĕ.

**2 е. п.** Çеçпĕл Мишшине халалласа сăвă çырман чăваш поэчĕ çук пулĕ. Генилле поэт сăнарĕ тăванла ытти халăх çыравçисемшĕн те - пысăк идеал. П. Хусанкай куçĕпе мĕнле куратпăр-ха эпир кăвар чĕреллĕ сăвăçа?

**Вулакан:** Çăлтăрсем — шултрисем, вĕттисем пĕр канашлăн
Ялкăшаççĕ уяр тӳпере
Пĕлĕте яр çурса, метеор пĕр самантшăн
Хыпăнать те — сӳнет ĕмĕре.
Çăлтăрсем çуталаççĕ çаплах килĕшӳллĕн,
Анчах лешĕ - мĕн ĕмĕр тăрши
Курнă çын асĕнчен çухалмасть вара ӳлĕм.

Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Ăмăрткайăк вĕçет ĕмĕрхи ту-сăрт урлă,
Тинкерсе вăл пăхать тавралла.
Унăн çулĕ тĕтреллĕ е çумăрлă, юрлă -
Вăл пурне те çĕнсе каçмалла.
Варкăшать, çӳлерен те çӳле ярăнать вăл.
Мал енче - çут хĕвелĕн ăшши.
Вăй кĕртет чăнкă ту, хирĕç çил, аслă тăвăл.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

**1 е. п.** Таçти çĕрте те, темле вăхăтра та Çеçпĕл Мишши хăй ачалăхне асран кăларман. Уншăн пĕтĕм телей çав вăхăтпа çыхăннăн туйăннă. Амăшĕпе пĕрле вăл юрă-кĕвĕ шăратса чунне йăпатнă, ашшĕпе кăмăл тăраничченкаласса ăсне туптанă.

Çеçпĕл çемьере малтанхи ача пулнă. Чухăнне чухăн та, пысăк та çутă ĕмĕтпе пурăннă унăн ашшĕ. Çавăншăнах-тăр Çеçпĕл Мишши ăна питĕ çывăха хурса юратнă. «Эпир унпала пулас кунсем çинчен ĕмĕтленеттĕмĕр, хамăр чухăнлăхра пурăннă пулин те, малашнехи кун-çулăмăр çинчен хаваслăн шухăшлаттăмăр..» - час-часах аса илнĕ вăл ашшĕне.

**2 е. п.** Çеçпĕлĕн 1911 çулта ашшĕнчен ĕмĕрлĕхех уйрăлма тивнĕ. Мĕнлерех пысăк хуйхă çемйишĕн, уйрăмах аслă ывăлĕшĕн. Çакна эпир Çеçпĕл Мишши 1920 çулта юратнă тусĕ А. П. Червякова патне янă çырăвĕнчен аван туйса илетпĕр:

*Пӳлĕмре пысăках мар кивĕ сĕтел, ун çинче шурă хут листисем, чернил выртать. Сĕтел çумĕнчи пукан çинче тарăн шухăша кайнă çамрăк поэт ларать. Уринче кивĕ çăн атă, çийĕнче таса та кивĕ тум-тир. Ун çине пăхсан çав вăхăтри йывăр пурнăç, çыравçăн чĕрене тивекен хуйхăллă шăпи куç умне тухса тăрать. Мĕн-ма çапла çамрăклах асап кӳреть-ши пурнăç çын шăпине? – тетĕн хăв ăшра... «Атăл юрри» юр□ янăрать (сăвви Çеçпĕл Мишшин, кĕвви А. Асламасăн).*

**Çеçпĕл Мишши сăнарĕ:** «Татах ак, татах ман чĕрене, манăн пĕтĕм пурнăçа чăтма çук тепĕр йывăр хуйхă килсе çапрĕ. Эпĕ унпа тĕл пуласса çав тери шанса пурăнаттăм, анчах ĕмĕтленнĕ ĕмĕт ĕмĕрлĕхех татăлчĕ: атте манран инçетре вилни çинчен хыпар илтĕм. Пурте пăрахнăскер, пĕр-пĕчченскер, пурнăç йăлтах çапса хуçнăскер, хуйхă айне пулнăскер... Эпĕ хамшăн çак йывăр вăхăтра Сирĕн çырăвăра илтĕм, Анастасия Петровна. Пĕлесчĕ Сирĕн эпĕ аттене мĕнле юратнине; пĕлесчĕ ман ăна тĕл пулас шанчăк мĕн тери пысăк пулнине, хăçан та пулин унпа тепре курнăçăпах тесе ĕненсе, чĕрем тăвăллăн вĕресе тапнине; пĕлесчĕ аттепе пĕрле чухнехи, тахçанхи çутă та илемлĕ телейĕме...».

**1 е. п.** Унтанпа тăхăр çул иртсе кайнă, тăхăр çул ашшĕ сăнĕ Çеçпĕл умĕнче çуталса тăнă. Çакă ăна пурăнма, ĕçлеме, вĕренме хистенĕ, хавхалантарнă, пуласси çинчен лайăхпа шухăшлаттарнă. Ашшĕ сăмахĕсене вăл яланах чĕре тĕпĕнче упранă, вăл ăс парса каланинчен тухмасăр, питĕ тăрăшса вĕреннĕ.

**2 е. п.** Ачалăх тĕнчин илемĕ, тавралăхăн ытараймми хитрелĕхĕ поэт чĕрине ĕмĕр асран каймми кĕрсе юлнă. Вăл шартлама хĕлĕн сиввине те, çу кунĕсен ăшшине те, ылтăн çулçăллă кĕркуннене те çывăххăн курма-туйма пĕлнĕ. Çуркуннен чĕрĕлĕх паракан хăватлă вăйне ытараймасăр, поэт хăйне çĕнĕ ят хунă - Çеçпĕл. Çеçпĕл - çурхи чечек. Хĕвел чечекĕ. Ăшша та, сивве те чăтать вăл. Этем куçĕнче яланах юлать, тĕнче вăраннине, çанталăк чĕрĕлнине астутарса тăрать. Çавăн пекех Çеçпĕл Мишши те. Вăл - чăваш поэзийĕн сывлăмлă таса ирĕ, илемлĕ чечекĕ.

Çуркунне Çеçпĕл Мишшин чи юратнă вăхăчĕ пулнă. Ăна поэт çулленех киленсе кĕтнĕ, уншăн ача пек хавасланнă. Çурхи кунсенче унăн чĕри пурнăç кĕввипе шăранса янранă, чунĕнче çулăмлă шухăш-ĕмĕт вĕресе тăнă.

**1 е. п.** Çуркунне туйăмĕ Çеçпĕл Мишшине мĕн-пур хăвачĕпе çавăрса илет. Вăл туйăм унăн сăввисене те çĕнĕ вăй кĕртет. Çак енĕпе «Чăваш поэтне Ахаха асăнса» тата «Чăн чĕрĕлнĕ» сăвăсем уйрăмах кăтартуллă. Çеçпĕл Мишши кусене шăпах хăйĕн чунĕ çĕнĕрен хĕмленсе, кăварланса чĕрĕлнĕ вăхăтра çырнă:

**Вулакан:** *«Чăн чĕрĕлнĕ» сăввине пăхмасăр калать.*

**1 е. п.** Поэт, инкек-синкек курсан та тĕршĕнсе лармасть, тĕрлĕ çĕре çитсе яш-кĕрĕме ĕçĕпе, сăмахĕпе хĕрӳлентерет, хăпартлантарать.

**2 е. п.** «Чăваш поэтне Ахаха асăнса» сăвăра та Çеçпĕл Мишши, тăван чĕлхе вăйне ĕненнине палăртса тата вăл чечекленсе-хитреленсе пынине курса, хĕрӳ йĕркесем хыврать:

Калас килет сана: «Чăваш чĕлхи илемĕ
Ӳссех пырать. Тăрсам! Каллех сăвă çырар!

Чăваш чĕлхи пур чух тăван поэт ятне
Вĕри, кăвар чунсем савма пăрахас çук...»

Иван Ахаха, чăваш совет поэзине пуçарса яракансенчен пĕрне, Çеçпĕл Мишши çывăх пĕлнĕ. Вăл хăйне евĕрлĕ хĕрӳ чунлă çын иккенне курса хĕпĕртенĕ.

**1 е. п.** Крымра сывалса пурăннă вăхăтра поэт чылай сăвă çырма ĕлкĕрет. Вĕсем: «Çĕн кун аки», «Тинĕсе», «Инçе çинçе уйра уяр...», «Катаран каç килсен...», «Кивви çĕтет», «Шăршлă каç йывăрри...» тата ытти те. Чăннипех те вăйлă сăвăсем вĕсем, чăваш совет поэзине иксĕлми хăват кӳрсе тăракан чаплă шедеврсем.

**Вулакан:** «Инçе çинçе уйра уяр» сăввине пăхмасăр калать.

**2 е. п.** Кивви çĕрсе çĕтнĕшĕн поэт çав тери хĕпĕртет, чĕри хĕвеллĕ ĕмĕре кĕтет, хăй пирки вара хăюллăнах: «Кăвар чĕрем – пин çын чĕри, эп пĕр çын мар – эп хам пин-пин», - тесе çирĕплетсе калать. Ку çаплах, тăван халăхĕн савăнăçĕпе, унăн хуйхи-суйхипе, ĕмĕчĕ-шухăшĕпе пурăнакан, унăн çутă пуласлăхĕшĕн хастаррăн кĕрешекен чăн-чăн поэт хăех вăл пин-пин чĕрене тăрать.

**1 е. п.** Çеçпĕл Мишши чăваш литературин историне чаплă ятпа кĕрсе юлчĕ - кăвар чĕре. Çак сăмахсене асăнсан, пирĕн ума чăннипех те кăвар чĕреллĕ, кăвар ĕмĕтлĕ, кăвар чĕлхеллĕ хастар поэт тухса тăрать. Çавăнпа пĕрлех поэтăн сăвви-юрри чĕлхе вĕçне килет:

Пĕлтер мана, тăван çĕр-шывăм:
Хăçан кăтартăн халăхна
Ху чĕлхӳпе хăват кĕртмешкĕн
Тĕнчене килнĕ ывăлна?
Кăвар чĕри, кăвар чĕлхеллĕ
Чăваш ачи, сассуна пар.

**2 е. п.** Çак манăçа тухми сăмахсене каласа аслă поэт тăван халăх кăвар чĕреллĕ поэтсене çуратасса канăçсăр чĕри сикми пуличчен кĕтнĕ. Хăй çĕре кĕricченех ĕмĕтленнĕ. Çĕнĕ саманари поэтăн мĕнле пулмалли çинчен вара Çеçпĕл хăйĕн «Тинĕсе» сăввинче питĕ витĕмлĕ те вăйлă сăнарлать.

*«Тинĕс шавĕ» кĕвĕ хуллен янăрать... Вулакан поэтăн «Тинĕсе» сăввине пăхмасăр çĕкленӳллĕн калать.*

**1 е. п.** Вăл вăхăтри çыру ĕçĕнче Çеçпĕл Мишши пек сăмах ăстисем, çивĕч ăсчахсем сайра курăннă. «Вăхăт çитĕ, - тенĕ вăл, - чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ, хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ - чăваш юрри те илтĕнсе кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринче таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ, вĕçĕ-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç, авалхи хуйхă сасси илтĕнĕ, телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ - çакă чăваш юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ, чăваш чĕлхи пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!»

Тăван чĕлхене, чăваш чĕлхине кăварлатаканĕ, хĕрнĕ хурçă тăваканĕ пулнă вăл.

**2 е. п.** Çеçпĕл кун-çулĕнче ăшри хирĕçӳллĕ самантсем пулман тесе калаймăпăр. Пуринчен ытла çакă ăна хăш-пĕрисем ним айăпсăр тапăннинчен те, теприсем ăнлансах çитейменнинчен те, çав вăхăтри самана кăткăслăхĕнчен те, кунпа пĕрлех тата поэт чунĕ питĕ çивĕч те черчен туйăмлă пулнинчен те килнĕ. Çапах та, вăхăтăн-вăхăтăн хуйха ӳкнĕ, кăмăлĕ хуçălнă, ăш-чикĕ тăвăнса тулашнă самантсем пулнă пулсан та, вăл чĕринчи ĕмĕт-шанчăкне сӳнме паман. Ку енчен илсен, «Хурçă шанчăк» сăввинчи йĕркесем уйрăмах витĕмлĕн те сулăмлăн шăранаççĕ.

**Вулакан:** «Хурçă шанчăк» сăввине пăхмасăр илемлĕ калать.

*Г. Хирбю композитор ку сăвă тăрăх юрă çырнă. Юрă кĕвви алă айĕнче пулсан хăнасене итлеттерме юрать.*

.

**1 е. п.** Патвар чун хаваллă пулнă поэт. Йывăр чирне пăхмасăр ырми-канми ĕçлет вăл. Чăвашла та, вырăсла та хастар сăвăсем хывать, тĕрлĕ сăрăпа ӳкерчĕксем тăвать. «Çырăттăм, ӳкерĕттĕм - чăваш наци культуришĕн ырă ĕç

туса хăвarăттăм», - çак ĕмĕт канăçсăррăн хĕмлентерет поэт чĕрине. Шевченко пек, Пушкинпа Лермонтов пек, К. Иванов пек, вăл сăвă çырма питĕ çамрăкла тытăннă, ӳкерме ăста пулнă. Поэт та, художник та вăл – пирĕн Çеçпĕл. Çеçпĕл Мишшин амăшĕ, Агафия Николаевна, аса-илĕвĕ те çакна çирĕплетсе парать. Итлесе пăхсамăр.

*«Эпир Çеçпĕл йăхĕнчен (Чуракассисен юрри)» юрă хуллен янăрать. Сăвви Г. Дубровăн, кĕвви Н. Никоноровăн.*

***Асăрх.:*** *Чуракасси - Çеçпĕл Мишшин амăшĕн çуралса ӳснĕ ялĕ.*

*Пӳлĕме чăваш тумĕ тăхăннă ватă хĕрарăм майĕпен кĕрет, хăнасене сывлăх сунса шаларах иртсе ларать. Иртнĕ вăхăтри пурнăçа аса илсе хуллен калаçа пуçлать.*

**Агафия Николаевна сăнарĕ:** Пĕррехинче пирĕн пата ачасен аслашшĕ Хĕветĕр пычĕ: «Асатте, лар, сан сăнна ӳкерем», - терĕ Мишша. Аслашшĕ килĕшрĕ. Пĕрикĕ сехет те иртмерĕ пулĕ, Мишша хăй тунă ӳкерчĕке стена çумне тирпейлесе çакрĕ. Каснă-лартнă аслашшĕччĕ вара.

- Ку ача художник пулать. Ăна вĕренме ямалла, - тетчĕç хамăр пата пыракансем.

**2 е. п.** Укахви мăнаккан, Агафия Николаевнăн, пичĕ çинче те, çамки çинче те пĕркеленчĕксем нумай. Вĕсене пурнăç йĕрĕсем теес килет ман. Тăхăр вунă çултан иртнĕ çак чăваш хĕрарăмĕ хăй ĕмĕрĕнче мĕн кăна курман пулĕ! Вăл курнине, вăл тӳссе ирттернине çырма та, каласа пама та хал çитерес çук. Вăрçă хыççăн вăрçă… Выçлăх çулĕсем. Çемьери йывăр кунсем…

*Укахви арчаран ывăлĕн «Çырнисен пуххи» кĕнекине кăларать.*

**Агафия Николаевна сăнарĕ:** Мишша хăйĕн «Чăваш арăмне» сăввине йăлтах ман пурнăçăм çинчен çырнăн туйăнать.

***Сăвва вула пуçлать:***

Чăваш арăмне асапшăн
Ашшĕ-амăш çуратнă,
Ачаранпах хурлăх чулĕ
Мăйĕ çине çакнă.
Хурт-кăпшанкă та çу кунĕ
Савăнса вĕçетчĕ,
Çут-çанталăкшăн, хĕвелшĕн
Вăл та хĕпĕртетчĕ.
Сан чĕрӳ анчах хĕн витĕр
Савăнăç пĕлместчĕ,
Вучах умĕнче вăраххăн
Ĕмĕрӳ иртетчĕ…

*Çак йĕркесене вуланă чух Агафия Николаевна куçĕнчен çутă тумламсем пăчăртанса тухаççĕ. Вăл сăвă калама чарăнать, кĕнекене сĕтел çине хурать. Пĕр вăхăт пӳлĕмре шăп, кашнин чунне хурлăх пусса илнĕ тейĕн.*

**1 е. п.** Агафия Николаевна хăйĕн ватлăхне пĕрре те палăртасшăн мар. Ывăнман-ха, тата çакна каласа парам тет. Чăнах та, кăвар чĕреллĕ поэтăмăрăн, Çеçпĕл Мишшин, ача чухнехи пурнăçĕ çинчен кам-ха ун пек тĕплĕн каласа пама пултарĕ?!

**Агафия Николаевна сăнарĕ:** Мишшана çуратиччен пĕр кун маларах эпĕ тĕлĕнмелле тĕлĕк куртăм: ман атте урамра, хапха умĕнче, тăрать пек. Пăхатăп та – пӳрт çумĕнче çап-çутă пуртă вырта парать. Аври темшĕн çурăк вара. «Атте, пуртă тупрăм», - тетĕп. Атте мана пӳрнипе юнать: «Асту, кĕлете кĕртсе хур», - тет. Ирхине хам курнă тĕлĕке Куçмана каласа пама çеç пуçланăччĕ - ăш ыратса килчĕ. Çав вăхăтра пирĕн пата кӳршĕ çынни Мархва пырса кĕчĕ. Эп тертленме пуçланнине курсан вăл: «Ачу çаврăннă, паян çурататăн», - терĕ. Чăнах та, çав кунах ывăл ача туса патăм. Ăна ят хутăмăр, Мишша терĕмĕр.

Мишша патвар çитĕнсе пычĕ: тăхăр уйăхрах утма тытăнчĕ, çулталăк тултарсан калаçма вĕренчĕ.

Аса килнĕ чух çавна та каласа хăварам: çуллахи пĕр кун старикпе иксĕмĕр Шăхасан пасарне кайрăмăр, хамăрпа пĕрле Мишшана та илтĕмĕр. Пасарта çӳренĕ чухне, кĕтмен çĕртен, ачана çухатрăмăр.

Малти кĕтесре халăх кĕпĕрленсе тăрать. Унта пĕр чĕлĕхлĕ купăс сутаççĕ-мĕн. Ак тамаша, çынсем хушшинчен Мишша персе тухрĕ, аллинче пĕчĕк купăс. Эпир сăнатпăр: Мишша пасар хушшипе купăс каласа пырать. Ашшĕ ун патне чупса çитрĕ те:

- Мĕн тăватăн, ачам? – тесе ыйтрĕ.

- Купăс калатăп, - тет Мишша.

- Купăсне ăçтан тупрăн?

- Ав çав лавккара сутаççĕ, - хуравлать Мишша. Куçма вара ачана çавăтрĕ те купăсшăн укçа кайса тӳлерĕ. Çапла Мишша пĕр чĕлĕхлĕ купăс туянчĕ…

Çакна та манман-ха. Пĕр кĕрхи кун, ир пуçласа каçчен пахчара хăмла татрăмăр. Пирĕнпе пĕрле Мишша та çине тăрса хăмла тататъ.

- Мишша, ĕçле-ĕçле ывăнтăн пулĕ, ларса кан, - тетĕп çакна шеллесе.

- Çук, канмастăп, часрах татса пĕтересчĕ, - тет Мишша. Эпир пĕчĕк ача çапла ăслă калаçнинчен пурте тĕлĕнтĕмĕр.

Пĕр аса килнĕ чухне çакна та каласа хăварам. Пĕр каçхине, мунча кĕрсе тухсан, пăхатăп та – килте Мишша ывăлăм çук. «Ял çумĕнчи çĕртме пуссине лаша çитерме кайрĕ вăл», - пĕлтерчĕ старик. Эпĕ хăраса ӳкрĕм.

Мĕнле капла, мунча кĕрсе тухнă ачана выртма ятăн пулать-ха? Шăнса пăсăлсан, мĕн курса тăрăпăр? – тетĕп. Куçма нимĕн те чĕнмест. Вăл хăй айăпне туйса илчĕ пулас.

Чăнах та, выртмаран Мишша хытă шăнса таврăнчĕ, часах аптраса ӳкрĕ. Ури шыççа кайрĕ, тупанĕ хытса ларчĕ. Ача уксахлама пуçларĕ. Ура ыратать тесе макăракан пулчĕ.

Пĕррехинче, Мишша патне апат-çимĕç леçме кайсан, Шăхасан ачисем каçса кайса вылянине куртăм. Ман Мишша, ури ыратаканскер, айккине пăрăнса тăнă та вĕсем вылянине хускалмасăр пăхать, пăхать… Мишша

ачасемпе савăнма, выляма пултарайманшăн ман чун хурланчĕ. Çавăн чухне Мишшана çуратиччен курнă тĕлĕк аса килчĕ, эпĕ тупнă пуртăн аври çурăк пулни çак инкеке кăтартнăн туйăнчĕ.

Мишша хыççăн эпĕ Курие, Петĕре, Кирлене, Иллене, Ульянана çуратрăм. Вĕсем пĕр-пĕринпе питĕ килĕштерсе пурăнатчĕç. Çавă хамăра та савăнтаратчĕ.

Мишша тĕрĕллĕ кĕпе питĕ тăхăнасшăнччĕ. «Тĕрĕллĕ кĕпе туса пар-ха, анне», - тетчĕ вăл час-часах. «Тĕрлесе ларма вăхăтăм çук-çке манăн, - теттĕм эпĕ. - Кăмăлу пулсан - хăвна тĕрлеме вĕрентем, - терĕм тепрехинче. Мишша килĕшрĕ. Эпĕ тĕрленине тимлесе пăхса ларчĕ, часах ăнкарса илчĕ. Çапла хăй валли кĕпелĕх хăех тĕрлерĕ. Çимĕк вăйине вара Мишша тĕрĕллĕ кĕпепе тухрĕ.

*Пĕр вăхăт хушши шăп ларсан Укахви ассăн сывласа илчĕ те аса илӳ çăмхине малалла тăсрĕ, анчах унăн калаçăвĕ нумая пымарĕ:*

Пĕр кунхине çыру çитрĕ. Ăна Мишшан сывăх тусĕ Украина çынни Хĕветĕр Пакрышень çырнă-мĕн. Вуланă май куç-пуç хуралса килчĕ, чĕре вăйĕ пĕтрĕ. Малалла мĕн пулнине ас тумастăп: «Сирĕн ывăлăр Мишша ура ыратнипе нумай тертленчĕ. Вăл чăтаймарĕ, вилчĕ». Çыруri çак сăмахсем мана ĕмĕрлĕхе хуçса хăварчĕç. Юратнă ывăлăм кун-çулĕ вăхăтсăр татăлчĕ … .

*Агафия Николаевна майĕпен пукан çинчен тăрса пӳлĕмрен тухса каять. Анне çинчен пĕр-пĕр хурлăхлă юрă хуллен янăрать.*

**2 е. п.** Кашни амăшĕшĕн чи хăрушши вăл - хăйĕн тăван ачине çухатни. Чăтмалла мар пысăк хуйхă, калама çук тарăн чĕре суранĕ. Мĕн тăвăн, ачупа пĕрле çĕр айне кĕрсе выртаймăн, темле йывăр пулсан та пĕтĕм чун-хавалне пухса малаллах пурăнма тивет. Вăхăт чуна сиплеймесен те, çапах та лăплантарĕ, пулăшĕ. Инкек куçа курăнса килмест тенĕ авалтан. Çаплах пулĕ. Эх, мăн тарăн чăваш хĕрарăмĕ, мĕн кăна тӳсмерĕн пулĕ, çапах пурнăç урапи айне пулмарăн. Мухтав та чыс сире, хаклă аннесем, чăваш ачи-пăчине кун-çул парса тĕрĕс-тĕкел ӳстернĕшĕн.

**1 е. п.** Çеçпĕл Мишши вăхăт-вăхăт хăйне чăтмалла мар йывăр туйнă. Анчах вăл ниçта та, нихçан та кăвар чĕрин хĕлхемне сӳнме паман, темĕн чăтса та, темĕн курса та пурнăçăн ырă ĕмĕчĕсене куçран вĕçертмен.

Çеçпĕл Мишши, çурхи кунсенче çут тĕнче чĕрĕлессине ĕненнĕ пекех, чăваш халăхĕн пурнăçĕпе культури те хăвăрт вăй илсе çĕкленессине хытă шаннă, сăвă хыççăн сăвă шăрантарнă. Унăн ĕнтĕ мĕн-пур иккĕленчĕк шухăшсене сирсе пăрахса каллех пурăнас, кĕрешес, ĕçлес килнĕ. Кунпа пĕрлех вăл чи вĕри туйăмпа юрататъ, хăйне те çавнашкалах юраттарасшăн. Анчах, унăн юратăвĕ телейсĕр. Мĕншĕн телейсĕр иккенне эсир, Анастасия Александровна Червякова аса-илĕвĕпе паллашсан ăнланса илетĕр:

**2 е. п.** «Пурнăç пире иксĕмĕре 1919 çулта тĕл пултарчĕ. Манпа паллашни Мишшашăн ахаль иртмерĕ. Вăл мана юрататчĕ, çавăн пек никам та юратман мана, юратассăн та туйăнмасть. Унăн юратăвĕ - чăн-чăн таса çын юратăвĕччĕ.

Мĕн тери юрататчĕ вăл мана... Пĕлместĕп, темшĕн вăл мана çапла юратнă. Юрату ăна асаплантаратчĕ çеç, савăнăçне кăтартаймарĕ. Эпĕ уншăн тусĕ тата аппăшĕ çеçчĕ, урăх никам та марччĕ, мĕншĕн тесен эпĕ арлă-арăмччĕ…».

**1 е. п.** А. П. Червякова Çеçпĕл Мишшишĕн чун юрри пулнă, çав юрра вăл чĕри тĕпĕнче упраса усранă. Поэтăн А. П. Червякова патне янă çырăвĕсем сакăрвуннă ытла сыхланса юлнă. Çавсем пулас мар-тăк, эпир унăн кăварлă юратăвĕ çинчен ку таранччен те пĕлес çукчĕ-тĕр. Çеçпĕлĕн кашни çырăвĕ - сăвă, хăй каларăш, «чĕре сасси вăл» (1921 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕ). Çав çырусене вуланă чух вĕсенче чи хĕрӳ те çепĕç туйăм хăватлăн çулăмланса çуннине кашни чĕре таппипе сисетĕн.

**Вулакан:** Ан васка-ха каймашкăн, тăхта —
Пĕр минут, пĕр самант та пулин!
Талтлатать шух чĕрем кăкăрта,
Юратать те … шанмасть те туллин.

Пĕр минут, пĕр самант та пулин,
Савнă тусăм, манпа эс юлсам.
Пурнăçра эпир иккĕн халь тин
Çав çулпа каяймастпăр пулсан!

Савнă тусăм, юлсам манпала,
Ляш пулам кăкăру çумĕнче!
Сывă-и, шăрăх-и, - малалла
Хурлăх çулĕ халь куç умĕнче…

*Пӳлĕмре сĕтел çумĕнче çамрăк поэт ларать. Хăйпе хăй калаçать, шухăшлă, чун савниĭĕ патне çыру çырать.*

**Çеçпĕл Мишши сăнарĕ:** «Хаклă Нуся!

Шăпа мĕншĕн ытлашши хаяр-ши манăн? Мĕншĕн вăл мана Сирĕн çумма çыхсах лартрĕ-ши? Мĕншĕн Сирĕн ытарайми чун, çепĕç сăн-сăпат мана хурлăх çеç кӳреççĕ? Пурнăçăма Сирĕн ятпа пурăнтăм, сывлăшăма Сирĕн ятпа сывларăм…

…Кăкăра темĕнле виçесĕр ăшă, таса туйăм капланса килет — эппин, эпĕ сан çинчен шухăшлатăп пулмалла. Нуся, мĕн тери ырă эсĕ, Нуся. Мĕн тери çывăх, мĕн тери тăван эсĕ маншăн. Савнă шураппам, Нуся! Хытă-хытă чăмăртатăп аллуна. Эсĕ мана «эсĕ» тесе çырнăшăн çилленесрен мĕнле хăрамастăп-ха эпĕ. Çук, пĕртте хăрассăм çук. Ма тесен хама туслă юратупа пĕртен-пĕр эсĕ кăна юратнине шанса тăратăп. Пурнăçăмра эс темĕнле ырă пирĕшти майлă. Çӳл тӳперен аннăскер. Урăхла шухăшлама пултараймастăп эпĕ сан çинчен. Мана эс нихçан та нимшĕн те çилленмен. Эс пурри маншăн — темĕнле асамлăх. Пурах-ши çĕр çинче сан çинчен ман пек шухăшлакан, манашкал туйăмпа пурăнакан тепĕр çын…»

*«Çеçпĕл халалĕ» юрă янăрать (сăвви Ю. Плотниковăн, кĕвви А. Орлов-Шуçăмăн)*

**2 е. п.** Çеçпĕл Мишши, унăн сăнарĕ, кашни юрри-сăвви, сăмахĕ чăваш халăх чĕринче, асĕнче пурăнать. Унăн ятне пăрахута, хăй çуралнă яла, Канаш районĕнчи ял-хуçалăх предприятине, библиотекăсене, шкулсене, Шупашкарти пĕр урама панă. Çеçпĕл ĕçленĕ çурт çине асăну хăми çапнă. Шупашкарта Çеçпĕлĕн палăкĕ тата «Сеспель» кинотеатр пур.

Çеçпĕле сума суса пирĕн сăвăçсем, композиторсем, ӳнерçĕсем сăвăсем, юрăсем, картинăсем чылай çырнă. Акă, тĕслĕхрен, Г. Хирбю «Хурçă шанчăк» юрă тата «Патриотла оратори» хайланă. Киеври илемлĕ фильмсен А. П. Довженко ячĕллĕ киностуди «Çеçпĕл» фильм ӳкернĕ.

1971 çулта чăваш патшалăх музыка театрĕ А. Асламас çырнă «Çеçпĕл» оперăпа пĕрремĕш хут паллаштарчĕ. Çеçпĕл Мишши сăввисем тăрăх çырнă произведенисем хушшинче А. Тогаевăн «Пуласси», А. Орлов-Шуçăмăн «Халаллăх», А. Петровăн пилĕк пайлă кантата «Чăваш çĕр-шывĕ çинчен хывнă юрă» тата ытти те.

**Вулакан:** Кăра çилсем, хура çилсем
Тек пӳлчĕç кăйкăр кайăка,
Ик çунату аманнăскер,
Эс кайрăн, кайрăн аякка.
Çĕн кун шăратнă çĕн чĕрӳ
Çунса тăратчĕ вутпалан,
Çӳл тӳпене çитес пекех
Çулăмланатчĕ вăл ялан.
Туптарăн эсĕ çутă çул
Яш кăкăрти сунтал çинче,
Хавал валеçрĕн çынсене
Çĕн кĕрешӳ саманинче.
Мĕн-ма-ши усрăн васкаса
Сăваплă çĕрĕн алăкне,
Пĕлеп: чуну сан чăтайман
Ултав тĕнчин усаллăхне.
Сăмахсăр калаçать санпа
Тăпру çинче ларан юман,
Пуçне усать хайхи çăка
Паян темрен вăтаннăран.
Ыр шăллăм, хупрăн ик куçна
Тăван çĕр-шывунтан инçе.
Халь лăпкăн, канлĕн çывăрсам
Сенкер Десна ытамĕнче.
*(Ф. Пакрышень «Çеçпĕл вилсен»)*

# Литература


1. Агивер, Х. Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ / Х. Агивер // Илем тĕкĕрĕ. – Шупашкар : Ч□ваш к□неке изд-ви, 1991. – С. 31-33.

2. Антонова, З. С. Тăван литература: 7-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / З. С. Антонова, П. Н. Метин. – Шупашкар : Ч□ваш к□неке изд-ви, 2002. – С. 28-36.

3. Давыдов-Анатри, В. Вут чĕреллĕ поэт [Çеçпĕл Мишши амăшĕ каласа панинчен] / В. Давыдов-Анатри // Хушма вулав : 8-мĕш класс валли. – Шупашкар : Ч□ваш к□неке изд-ви, 1993. – С. 41-48.

4. Дедушкин, Н. С. Парка тымар: Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен / Н. С. Дедушкин // Тăван Атăл. – 1986. - № 12. – С. 30-35.

5. Збанацкий, Ю. О. Çеçпĕл : роман / Ю. О. Збанацкий. – Шупашкар : Ч□ваш к□неке изд-ви, 1982. – 432 с.

6. Иванов, В. Çеçпĕл Мишши – шкул шăнкăравĕ / В. Иванов // Халăх шкулĕ=Народная школа. – 2000. – № 1. – С. 15-18.

7. Иванов, Н. И. Поэт хавалĕ : документлă очерк / Н. И. Иванов. – Шупашкар : Ч□ваш к□неке изд-ви, 1984. – 64 с.

8. Кăвар чĕре : поэт çинчен аса илнисем / В. А. Долгов. – Шупашкар : Ч□ваш к□неке изд-ви, 1979. – 179 с.

9. Кудаков, Ю. Пуласси=Грядущее / Ю. Кудаков // Халăх шкулĕ=Народная школа. – 1999. – № 3. – С. 96-98.

10. Кузьмин, Г. К. Пиччем çинчен / Г. К. Кузьмин. – Шупашкар : Ч□ваш к□неке изд-ви, 1973. – 80 с.

11. Кузнецов, И. Д. Çĕн чăвашăн çĕн поэчĕ: Çеçпĕл Мишши пултарулăхне савса // Кузнецов, И. Истори тĕрĕслĕхĕпе пурнăçри чăнлăх / И. Кузнецов. – Шупашкар, 1986. – С. 142-150.

12. Мастеров, К. Çеçпĕл Мишши чăваша таврăнни : «Çеçпĕл» илемлĕ фильм çинчен / К. Мастеров // Ялав. – 1971. - № 4. – С. 16-18.

13. Петров, К. Çĕн ĕмĕр чăвашĕ : [Çеçпĕл Мишши сăвăç пирки] / К. Петров // Тăван Атăл. – 1989. – №11. – С. 66-67.

14. Пирĕн Çеçпĕл : Çеçпĕл Мишшине чăваш тата ытти тăванла халăхсен поэчĕсем халаллانă сăвăсем. – Шупашкар : Ч□ваш к□неке изд-ви, 1989. – 120 с.

15. Разумов, Г. Кăвак çутă кăваккăн урайне ӳксен, е Çеçпĕл кунĕнче килнĕ шухăшсем : [Çеçпĕл Мишши сăвăç çинчен] / Г. Разумов // Çамрăксен хаçачĕ. – 2006. – 2 чӳк (№ 47). – С. 10.

16. Сементер, Ю. Çеçпĕл – пирĕн чĕрере / Ю. Сементер // Халăх шкулĕ=Народная школа. – 1995. – № 1. – С. 93-96.

17. Сеспель, М. К. Паянтан=Отныне : стихи / М. К. Сеспель. – Чебоксары : Издат. дом «Пегас», 2006. – 144 с.

18. Сеспель, М. К. Собрание сочинений=Çырнисен пуххи : поэзия, проза, драматургия, письма / М. К. Сеспель. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1989. – 526 с.

19. Сеспель, М. К. Чăн чĕрĕлсен : сăвăсем, асаилӳсем / М. К. Сеспель. – Шупашкар : Ч□ ваш□ неке изд-ви, 1994. – 111 с.

20. Çеçпĕл, М. Çырнисен пуххи=Собрание сочинений / М. Çеçпĕл. – Шупашкар : Ч□ ваш□ неке изд-ви, 1959. – 356 с.

21. Çеçпĕл, М. Çырнисен пуххи=Собрание сочинений / М. Çеçпĕл. – Шупашкар : Ч□ ваш□ неке изд-ви, 1999. – 383 с.

22. Çеçпĕл Мишшине хисеплесе: Украинăра «Венок Сеспелю» кĕнеке тухни çинчен // Тăван Атăл. – 1980. - № 12. – С. 51.

23. Хлебников, Г. Çеçпĕл Мишшин пултаруллăх меслечĕпе поэтики / Г. Хлебников // Тăван Атăл. – 1989. – № 11. – С. 69-72.

24. Хирбю, Г. Хурçă шанчăк : юрă / Сăвви Çеçпĕл Мишшин // Тăван Атăл. – 1961. - № 6. – С. 3.

25. Чăваш сăмахлăхĕ: VIII класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / В. П. Никитин (Станъял). – Шупашкар : Ч□ ваш□ неке изд-ви, 2003. – 318 с.

26. Червякова, А. А. Кая юлса çитнĕ çырусем : [Анастасия Александровна Червякова Çеçпĕл Мишши патне янă çырусем] / А. А. Червякова // Тăван Атăл. – 1989. – № 11. – С. 1-4.

27. Чичканов, П. Н. Кăвар чĕре: Çеçпĕл Мишши Украинăра : биографилле роман-хроника / П. Н. Чичканов. – Шупашкар : Чăвашиздат, 1965. – 284 с.

28. Эртиван, В. Юр айне пулнă саркайăк : [Çеçпĕл Мишши сăвăç çинчен] / В. Эртиван // Тăван Атăл. – 1989. – № 11. – С. 58-64.

29. Юмарт, Г. Çеçпĕл куçарма та шутланă / Г. Юмарт // Халăх шкулĕ=Народная школа. – 2000. – № 1. – С. 20-21.

30. Юмарт, Г. А. С. Пушкинпа Çеçпĕл Мишшине асăннă май : [стихотворение, посвященное А. С. Пушкину и Михаилу Сеспелю] // А. С. Пушкин чăвашла янăрать : статьясемпе сăвăсем / Г. Юмарт. – Шупашкар : Руссика, 2004. - С. 141-142.